**Композитор**
**Филипп Лукина халалласа**

*Юрий Семендер,*
*Чăваш халăх поэчĕ*

Çичçĕр çитмĕл çичĕ тĕрлĕ
Çутçанталăкăн чĕлхи:
Çил сăртран сикет пуçхĕрлĕн,
Çупăрлать ачаш çилхи.

Ретĕн-ретĕн ӳснĕ çирĕк
Шăнкăр шывлă айлăмра.
Такмакпа ташлать пит йӳрĕк,
Пикенет кĕçех юрра.

Хир сăмахĕ те ынатлă:
Урокри ача-пăча
Ăмăртса çĕкленĕн алă
Тем каласшăн, ав, калча.

Юратса пăрахнă тейĕн
Шăхлич-кайăк чĕпчене,
Сапăр кĕввинче илтейĕн
Ĕшнери туйăмсене...

Каçăхса кайса тăнлатăн
Эс тĕнчемĕр сассине,
Пĕрчĕн-пĕрчĕн пуçтаратăн
Хăвăн аслă чĕрӳне.

Çĕр хăвачĕн, пĕлĕт влаçĕн,
Атăл хумĕн çеммине
Куçарса чипер тăлмачăн
Парнелен этем чунне.

1984.